# ÇĔНТЕРӲ КУНĔ

*Сăвви Владимир Харитоновăн*
*Кĕвви Давид Тухмановăн*

Çĕнтерӳ, эс пултăн питĕ аякра.
Сӳнес пекчĕ кăвар сивĕ вучахра.
Тĕтĕм витĕр эпир утнă малаллах,
Çак уявшăн тăкнă юн эпир пайтах.

*Çĕнтерӳ, эс*
*тулнă тĕтĕм шăршипе.*
*Çĕнтерӳ, эс*
*шурă çӳçлĕ паттăр пек.*
*Савăнатпăр та йĕретпĕр харăсах.*
*Çĕнтерӳçĕм!*
*Çĕнтерӳçĕм!*
*Çĕнтерӳçĕм!*

Куç хупмасăр тăкрĕ тар çĕршыв ĕçре,
Çак уяв çеç, çĕнтерӳ çеç кирлĕрен.
Ир те, каç та эпир çунтăмăр вутра, –
Çĕнтерӳ çеç çиттĕр терĕмĕр часрах.

Таврăнмарĕ пĕтĕм паттăр ар килне...
Ман чупасчĕ сывлăм тăрăх халь, анне.
Çур Европа юлчĕ тин кăна хыçра, –
Çĕнтерӳ çеç çиттĕр терĕмĕр часрах.

*Чăвашла Валери ТУРКАЙ куçарнă.*
*10.05. 2020*